28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ОКТЯБРЬ
21
ВЫРСАРНИКУН
205 (6956) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе
Шупашкар хула комитечĕн,
ЧАССР Верховнăй Совечĕн
тата Шупашкар хула
Совечĕн хаçачĕ

Выльăх-чĕрлĕхе ăшă çуртйĕрте тата тутă хĕл каçарар!

Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче пирĕн республикăри колхозсем государствăна аш-какай, сĕт-çу тата ытти тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕх продукчĕ памалли хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçласа пычĕç. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăрах, республикăри нумай колхозсем обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатса пычĕç. Кăçал колхозсенчи выльăхсен шучĕ чылай ӳсрĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне тултарнă районсен хисепĕ пысăкланчĕ.

Йышлă выльăх-чĕрлĕхе лайăх пăхса хĕл каçарас тесен, çителĕклĕ апат тата ăшă çуртйĕрсем кирлĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленесси çинчен» ятарласа постановлени йышăнчĕç. Çак постановленире хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе мĕн тумаллине пур енчен те уççăн тата тĕплĕн кăтартса пачĕç. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ вырăнти советпа çĕрĕç органĕсене, партипе комсомол организацийĕсене, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен мĕнпур работникĕсене Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнма, обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ апат-çимĕç пухса хума, выльăх-чĕрлĕх çурчĕсене хĕле вăхăтра та тĕплĕн хатĕрлеме хушрĕç.

Нумай колхозсем çак постановление пурнăçлас тесе пикенсе ĕçлерĕç, выльăх-чĕрлĕх валли ăшă çуртйĕрсем, çителĕклĕ апат хатĕрлерĕç. Октябрьски районри «Опыт», «Правда», Тимошенко, Буденный ячĕсемпе тăракан тата ытти чылай колхозсем выльăх-чĕрлĕх çурчĕсене юсаса, ăшă тытмалла тунă, выльăхсем валли кирлĕ таран апат хатĕрленĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн постановленийĕ хыççăн çак районри нумай колхозсем выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрне юсас тĕлĕшпе чылай ĕç турĕç. Элĕк районĕнчи Тукташри «Сунтал» колхоз пур тĕрлĕ выльăхсем валли те çуртйĕр хатĕрлесе çитерпĕ, вĕсене ăшă каймалла мар тунă, кантăксене лартнă, 30 лаша вырнаçмалăх çĕнĕ вите тунă. Çак районри «Новая сила» колхоз та выльăх-чĕрлĕх çурчĕсене юсаса пĕтернĕ, 80 ĕне вырнаçмалăх çĕнĕ вите туса лартнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ постановлени йышăннă хыççăн пĕр уйăх иртрĕ. Анчах та выльăх-чĕрлĕх валли çуртйĕр тата апат хатĕрлесси республикăри нумай колхозсенче халĕ те чăтма çук начар пырать. Елчĕк, Тăвай, Хĕрлĕ Чутай, Муркаш, Калинино, Куславкка районĕсенче тата ыттисенче те нумайĕшĕнче выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсем хатĕрлес енĕпе уйрăмах начар ĕçлеççĕ. Елчĕк районĕнче выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрне хĕле хатĕрлес ĕç çинчен пачах манса кайнă.

Калинино районĕ ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса пырать. Государствăна тырпул, çĕрулми, пахчаçимĕç парас енĕпе те кайра мар. Кунта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана та иртерсе тултарнă. Анчах та выльăх-чĕрлĕх çурчĕсене хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе районра пачах çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Лаша витисене 50 процент ытларах, ĕне витисене 23 процент, пăру витисене 45 процент кăна хатĕрлесе çитернĕ.

Выльăхсене лайăх хĕл каçарас тесен, çителĕклĕ таран апат хатĕрлени калама çук пысăк вырăн йышăнать. Выльăх валли уйăрнă апата лайăх пăхса усраманнине пула, уйрăм колхозсенче паха апат çĕрсе пĕтет. Муркаш районĕнчи Ульянов ячĕпе тăракан колхозра 400 центнер улăх утине çĕртсе янă. Уйрăм колхозсенче комбайн вырнă хыççăн юлнă улăма пухмаççĕ. Куславкка районĕнчи «Первое мая» колхозра комбайн хыççăн юлнă çуртырри улăмне халĕ те хиртех вырттараççĕ. Çавăн пек тĕслĕх Çĕрпӳ районĕнчи «Пионер» колхозра тата ытти хăшпĕр колхозсенче те пур. Чылай колхозсенче выльăх валли кирлĕ пулакан çĕрулмипе тымарçимĕçсене çак вăхăта çитсе те пуçтарса пĕтермен. Выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсем хатĕррине тĕрĕслекен государство комиссийĕсем чылай районсенче çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Çак тĕслĕхсем вĕсем нумай районсен руководителĕсем выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарас тĕлĕшпе ытла та çителĕксĕр ĕçлени çинчен калаççĕ. Халĕ лăпланса лармалли вăхăт мар. Выльăх-чĕрлĕх валли ăшă та сутă çуртйĕр хатĕрлесси—паянхи ĕç, çак ĕçе тăсса пынипе ниепле те килĕшме çук. Иртнĕ çул выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма кирлĕ пек хатĕрленмен пирки чылай колхозсенче çамрăк выльăхсем нумай вилсе пĕтрĕç. Иртнĕ çулхи йăнăша кăçал тума юрамасть. Кашни район тата кашни колхоз выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕçе халĕ пĕтĕм вăя хумалла. Колхозри платниксене, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекенсене пурне те ытти ĕçрен хăтарса, выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене юсас ĕçе мобилизацилемелле.

Выльăх апачĕ—выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн никĕсĕ пулса тăрать. Выльăх апатне пĕтĕмпех тĕплĕн виçсе шута илмелле, ăна ферма заведующийĕсемпе фуражирсен аллине памалла. Выльăх апатне перекетсĕр тыткаланине хирĕç кĕрешмелле, ăна çĕртсе е салатса пĕтерекенсене пĕр хĕрхенмесĕр çирĕп ответ тыттармалла. Выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленнине тĕрĕслекен комиссисен ответлăха туйса ĕçлемелле, кашни колхозах тĕплĕн тĕрĕслесе, çитменлĕхсене кăтартса памалла, хăйсен кăтартăвне мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесех тăмалла.

Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсен выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕçсене куллен ертсе пымалла, çак ĕçе парти, совет, комсомол организацийĕсене явăçтармалла, колхоз руководителĕсене конкретнăй заданисем парса, вăл заданисене пурнăçланине çирĕп тĕрĕслесе тăмалла, выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленес енĕпе социализмлă ăмăртăва анлăнрах сарса пымалла. Кострома облаçĕнчи «XII Октябрь» колхоз членĕсем чĕнсе каланине колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Колхозсенчи выльăхсен хисепне ӳстерсе пырасси, ку тĕлĕшпе государство панă плана ăнăçлăн тултарасси, çапла вара çĕршыври ĕççыннисен апат-çимĕç ресурсĕсене пуянлатасси выльăх-чĕрлĕхе лайăх хĕл каçарнинчен нумай килет. Çавăнпа та колхозсен фермисене хĕле хатĕрлес ĕç халĕ пирĕн умра тăракан чи ответлă задачăсенчен пĕри пулать. Ку енĕпе халĕ кашни колхозрах хĕрӳллĕ кĕрешӳ пымалла.

Укçа-тенкĕ пухмалли плана вăхăтра тултарассишĕн

ВĂРНАР. (Телефонпа, хамăр корр.). Финанс работникĕсемпе ял Совет председателĕсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу Çĕрпӳпе Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи финанс работникĕсемпе Госстрах работникĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнсе каланине сӳтсе-яврĕ. Районри финанс работникĕсем Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă тĕле IV-мĕш кварталти укçа-тенкĕ пухмалли плана 67 процент тултарма обязательство илчĕç. Вăл шутран плана страховка тӳлевĕсем тăрăх 75 процент, перекет кассине вкладсем хывас тата заем укçи пухас енĕпе 70 процент, налог тӳлевĕсем тăрăх 75 процент тултарма пулчĕç.

Халĕ ку тĕлĕшпе финанс работникĕсемпе ял Совечĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăн çарса пыраççĕ.

Колхоз сачĕсем

Ку ĕçĕн пуçламăшĕ 7—8 çул каялла пулнă. Çĕмĕрле районĕнчи Егоркино ял Советĕнчи «Большевик» колхозри ватă колхозник Александр Агапович Спеков колхозра сад тума шут тытнă. Çак ĕçре ăна колхоз правленийĕ те пулăшса пынă.

Александр Агапович сад ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен бригада тунă, унпа ĕçлеме çĕр участокне хăй суйласа илнĕ. Çапла, малтанхи çул, 1938 çулта, темиçе çĕр улмапа çырла йывăççисем лартса хăварнă. Тепĕр çулне вара ăна икĕ хут ытларах ӳстернĕ. Халĕ колхоз сачĕ 10 гектар йышăнать. Унта çимĕç кӳрекен улмуççисем ӳсеççĕ. «Антоновкăпа» «Анис» улмасси йывăççисемех 237 тĕп шутланаççĕ, унсăр пусне ытти сортсем те нумай. Унтах çур гектар ытла чие çырли тата çавăн чухлех шултăра хăмла çырлисем пур.

1940—41 çулсенчи сивĕсенче чылай çĕрте садсем йăлтах пĕтрĕç, вĕсене сыхласа хăвараймарĕç. Сад ăстаçи Александр Агапович ун чухне çамрăк сада ăнăçлăн сыхласа хăварнă. Улмапа çырла йывăççисен умне вĕсем кĕркуннех 500 лаз ытла тислĕк кăларса купаласа хунă. Сад тавра хĕлле юр тытма пулăшакан йывăççисем лартса ĕрчетнĕ. Çапла хĕлле йывăççисем юрпа лайăх витĕннĕ те сивĕрен пĕр сиенсĕрех çăлăнса юлнă.

«Большевик» колхозăн сачĕ çулсерен 15—16 пин тенкĕ тупăш парать.

Сад ĕçĕн бригадирне Спеков юлташа хăйĕн ĕçĕнче çитĕнӳсем тупăшăн правительство «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль парса награжăланă.

Районри Ленин ячĕпе тăракан колхозра та сад тума 15 гектар çĕр уйăрнă. Çав пĕтĕм участока 1600 тĕп улма йывăççи, кусăр пусне хăмла çырли, хурлăхан, клубника нумай лартнă. Колхозра питомник пур. Колхоз питомникрен улмапа çырла йывăççисене ытти колхозсене те парса тăрать. Кунта опытлă пахчаçă-мичуринец Н. Карпов юлташ ертсе пынипе ятарласа тунă звено ĕçлет.

Çавăн пек садсем «Ударник», «Новая жизнь», «14 лет Октября», «Волга» колхозсенче те пур.

Çĕмĕрле хулинче учрежденисенче, рабочисемпе служащисен кил вырăнĕсенче садсем лартса ĕрчетме пысăк майсем пур. Çĕнĕ хулана илем кӳмелле. Ку тĕлĕшпе Çĕмĕрле хула Совечĕн хăй пусарнă [illegible] вĕсне çитермелле.

Е. ВОЛКОВ.

СССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиссийĕн членĕсем пулма кандидатсем тăратни

УЗБЕКИСТАНРИ КОММУНИСТСЕН ОРГАНИЗАЦИЙĔНЧЕН ЮСУПОВ УСМАН ЮЛТАША КАНДИДАТА ТĂРАТНĂ

ТАШКЕНТ, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Узбекистанри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕ СССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиссийĕн членĕ пулмашкăн кама кандидата тăратасси çинчен сӳтсе-явнă. Вара Узбекистанри коммунистсен организацийĕнчен Тĕп суйлав комиссийĕн членĕ пулмашкăн Узбекистанри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарьне Юсупов Усман юлташа кандидата тăратма йышăннă.

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ АСЛĂ ШКУЛСЕМПЕ НАУКА УЧРЕЖДЕНИЙĔСЕНЧЕ ĔÇЛЕКЕНСЕН ПРОФСОЮЗĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕТĔНЧЕН Н. Г. БРУЕВИЧ АКАДЕМИКА КАНДИДАТА ТĂРАТНĂ

Совет Союзĕнчи аслă шкулсемпе наука учрежденийĕсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн Центральнăй Комитечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура СССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиссийĕн членĕ пулмашкăн кама кандидата тăратасси çинчен сӳтсе-явнă.

Çак профсоюзăн Центральнăй Комитечĕ Тĕп суйлав комиссийĕн членĕ пулмашкăн СССР Наука академийĕн секретарьне Николай Григорьевич Бруевич академика кандидата тăратма йышăннă. СССР Верховнăй Совечĕн Президиумне Николай Григорьевич Бруевича Тĕп суйлав комиссийĕнче Совет Союзĕнчи аслă шкулсемпе наука учрежденийĕсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн представителĕ пулса ĕçлеме çирĕплетме ыйтнă.

Н. Г. Бруевич—СССР Наука академийĕн действительнăй членĕ, генерал-лейтенант, Мускаври Бауман ячĕпе тăракан Аслă техника училищин тата Жуковский ячĕпе тăракан Сывлăш-çар академийĕн профессорĕ. Бруевич юлташ—точнăй механика тата механизмсемпе машинăсен теорийĕ тĕлĕшпе ĕçлекен паллă специалист. (ТАСС).

ГАЛЛЕРЕЙĂНА 15.000 ÇЫН ПЫРСА КУРНĂ

Чăвашсен художество галлерейи вăрçă пуçлансан хупăннăччĕ. Ăна пĕлтĕр Октябрь уявĕ умĕн çĕнĕрен йĕркелесе уçнă. Вунпĕр уйăх хушшинче галлерейăна 15.000 çын таран пырса курнă. Пуринчен ытла, экскурсантсем нумай пулнă, пурĕ галлерейăна 78 экскурси пынă. Хăшпĕр экскурсисенче 500 çын таран пулнă.

Октябрь уйăхĕ—государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăх

Хĕрлĕ Çар фондне тырă тата çĕрулми параççĕ

ШУМЕРЛЯ. (Хамăр корр.). Районри малта пыракан колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлесе пыраççĕ. 54 колхозран 19 колхозĕ государствăна тырă памалли çулталăкри плана иртерсе тултарчĕç. Молотов ячĕпе тăракан колхоз планран иртерсе Хĕрлĕ Çар фондне 915 пăт тырă, 500 пăт çĕрулми леçрĕ. «Красный партизан» колхоз членĕсем государствăна планран иртерсе 500 пăт тырă тата 500 пăт çĕрулми леçме йышăнчĕç.

«Прожектор», «Трактор», «Новая жизнь», Ленин ячĕпе тăракан, «Активист», Ворошилов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те государствăна тырă памалли çулталăкри плана тултарнă, халĕ планран иртерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă, çĕрулмипе пахчаçимĕç параççĕ. 24 колхоз çĕрулмипе пахчаçимĕç памалли обязательствăсене пурнăçланă. «Орешино», «Новая жизнь», Калинин ячĕпе тăракан, «Париж Коммуни», «Олешево», «Трактор» колхозсем пĕрчĕллĕ тырăсемпе пăрçа йышши культурăсене çапса пĕтернĕ. Халĕ вăрлăхлăх куракăсене çапаççĕ. Анчах, районĕпе илсен, кĕлтесене капана хывас, авăн çапас, государствăна тырă парас ĕçсем çаплах çителĕксĕр пыраççĕ-ха. Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхозăн кĕлтесене капана хывмалли тата 100 гектар ытла шутланать. Кунта авăн çапасси те япăх пырать. МТС-ăн «МК-1100» маркăллă молотилки патне çителĕклĕ таран çынсем кăларман пирки, талăкра 6—8 тонна çеç çапаççĕ. Авăна çĕрле çапассине йĕркелемен. Колхоз председателĕ В. Степанов ĕçе организацилес вырăнне часчасах ĕçсе ӳсĕрĕлсе çӳрет. Колхоз государствăна тырă парса татман тата ялхуçалăх ĕçĕсенче юлса пырать, çав вăхăтрах Степанова хăйĕн килĕнчи тислĕке пахчана тăкма, анкартинчи урпине çапма ниме тунă: хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче вара нимере 6 лаша, 12 колхозник пулнă. Киров ячĕпе тăракан колхоз халĕ те çĕрулми кăларса пĕтермен.

Кĕлтесене капана хывас ĕç «Молодой колхозник» колхозра та япăх пырать. Кунта кĕлтесене 50 процент та капана хывман. Итем çинче çапнă тырă сăвăрмасăр 2—3 кун выртать, сăвăрнă тырра та вăхăтра амбара кĕртмеççĕ. «Молодой колхозник» колхоз кăçал тырпулсене пухса кĕртес енĕпе районра чи кая юлчĕ. Ăна кӳршĕри колхозсем тырă вырса пачĕç. Апла пулин те çулса пăрахнă сĕлĕ куписем паянхи кун та уйрах шӳсе выртаççĕ

Çитĕнӳсемпе лăпланса лармаççĕ

ВĂРНАР. «Заря» колхозра ĕçсем вăхăтра та ăнăçлăн пулса пыраççĕ.

Кăçал «Заря» колхоз членĕсем, пирĕн çĕршыв çĕнтерннпе хавхаланса, ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра вĕçлессишĕн ăмăртса ĕçлерĕç. Колхоз государствăна тырпул, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татнă тата авăн çапса та пĕтернĕ. Хĕрлĕ Çар фондне 312 центнер тырă планран иртерсе панă. Çĕрулмие тата пахчаçимĕçе сивĕсем пуçланиччен пуçтарса кĕртнĕ. Çĕрулмине выльăх-чĕрлĕх валли тата вăрлăхлăх хăварнă хыççăн, колхозниксене ĕçкунĕ пуçне 1,5 килограмм валеçсе панă.

Çаксемпе пĕрлех колхозра выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма та тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Выльăх апачĕсене аслă конюхпа фермăсен заведующине акт тăрăх панă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пур выльăхсем енĕпе те тултарнă. Выльăх-чĕрлĕх витисене фермăсенче ĕçлекенсемех юсаса пĕтернĕ. А. Терентьев, П. Алексеева, М. Максимова юлташсем кашни кунах витесене юсас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлерĕç.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене государствăна парас ĕç те кунта аван пырать. 1945—46-мĕш çулсемшĕн аш-какай ытлашшипех парса татнă. 3.199 литр сĕт, 1845 çăмарта, 35,3 килограмм çăм парса обязательствăсене пĕтĕмĕшпех тултарнă.

«Заря» колхоз членĕсем çак çитĕнӳсемпе лăпланса лармаççĕ, вĕсем çитес çулта татах та ытларах тупăш туса илессишĕн ĕçлеме те тытăнчĕç. Халĕ 100 центнер тырра вăрлăхлăх сортласа хучĕç. Ку ĕçре У. Федорова, А. Данилова колхозницăсем тăрăшса ĕçлеççĕ, кулленхи нормăна ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Çак кунсенчех сеялкăсене те юсаса пĕтереççĕ.

С. ПУДАКОВ.

Тырра япăх пуçтараççĕ

Муркаш районĕнчи «Çĕнĕ пурнăç» колхоз тырпула пухса кĕртес ĕçре кая юлса пырать. Ĕç çакăн пек пыни пĕтĕмпех ĕç дисциплини начарринчен килет. Кунта юлашки кунсенче авăн çапма пачах чарăнчĕç. Çĕмелсем çуррине яхăн хиртех лараççĕ. Колхоз бригадирĕ Яковлев юлташ, колхоз пурлăхне сыхлас тĕлĕшпе ĕçлес вырăнне, итемрен арпа улăма хăй йăтма тытăннă, ун хыççăн ытти колхозниксем арпа çĕклеме пуçларĕç. Уйра тырпул япăхса ларать, итемре тырпула тата выльăх апатне салатаççĕ. Çакна колхозпа ревизи комиссийĕ те председателĕсем кураççĕ, анчах нимĕн те тумаççĕ.

А. АНИСИМОВ.

Промартельсенчи комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем

«Швейпромсоюз» системине кĕрекен промартельсенчи комсомолецсемпе çамрăксен бригадисенчен сентябрь уйăхĕнче уйрăмах Октябрьски районри «Труд» артелĕн 8-мĕш бригади тухăçлă ĕçлерĕ. Ăна Николаева юлташ ертсе пырать. Бригадăри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçленине пула çак бригада иртнĕ уйăхри производство планне 181 процент ытла тултарчĕ. Артельти Чумаковăпа Богданова ертсе пыракан çамрăксен бригадисем те сентябрь уйăхĕнче паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕç. Вĕсем производство планне 110—125 процент тултарчĕç. Çак бригадăсенчи Поликарповăпа Герасимова нормăна кулленех 200—225 процент таран тултараççĕ.

Иртнĕ уйăхра Вăрмарти Осипенко ячĕпе тăракан артель коллективĕ те планран иртерсе 20 процент чухлĕ продукци туса кăларчĕ. Артельте уйрăмах Никитина юлташ ертсе пыракан çамрăксен бригадине палăртмалла. Вăл сентябрь уйăхĕнчи задание 141 процент тултарчĕ. Çак бригадăри Федорова иртнĕ уйăхра хăйĕн планне 484 процент тултарнă. Çавăн пекех Л. Смирнова, М. Васильева, П. Петрова, М. Кузьмина çамрăксем те хăйсен уйăхри заданийĕсене 104—246 процент тултарчĕç.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă хыççăн, артельти çамрăксем çак уйăхра татах та тухăçлăрах ĕçлеме тытăнчĕç. Вĕсем октябр уйăхĕнчи производство программине срокчен тултарма тата пĕрремĕш сортлă продукци кăна туса кăларма тăрăшаççĕ.

З. СЕМЕНОВ.

Шкул çине тимсĕррĕн пăхаççĕ

ИШЛЕЙ. Хыркассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкул кăçал вĕренӳ çулне лайăх хатĕрленсе кĕтсе илчĕ. Шкул çуртне юсанă, вĕренӳре кирлĕ хатĕрсене пĕтĕмĕшпех илсе хатĕрленĕ. Ачасем валли вĕри апат организацилеме шкул участокĕнчен çĕрулмипе урпа туса илнĕ. Вĕренӳ çулне çитнĕ ачасене пурне те шкула явăçтарнă. Ку тĕлĕшпе çывăхри колхозсем 25 ачана çăматă, 28 ачана пальто илсе пама йышăннă.

Çаксемпе пĕрлех шкул ĕçĕнче туса çитереймен ĕçсем те пур-ха. Шкул коллективĕ Атăл леш енче 300 кубометр вутă хатĕрленĕ. Анчах çак вутта Атăл урлă каçарас ĕçре Ишлей райлесхозĕ чăрмантарса çеç пырать.

Шкулăн карти кивелсе, ишĕлсе пĕтнĕ. Ăна юсама хăма çук. Шкултан Сӳктерти хăма çуракан завод инçе мар. Унти рабочисемпе служащисен ачисем шкула вĕренме çӳреççĕ пулин те, завод руководителĕсем шкула пулăшас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Вĕсенчен карта тытма хăма ыйтсан: «Эпир сире пулăшма тивĕçлĕ мар», тесе ответлеççĕ.

Я. ВАСИЛЬЕВ

Çичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ

Совет çĕршывĕ тăрăх

ЯЛХУÇАЛĂХНЕ ВАЛЛИ КВАЛИФИКАЦИЛЛĔ КАДРСЕМ

Пĕр çул вĕренмелли ялхуçалăх шкулĕсене кăçал 49.600 çын илмелле. Çав шкулсенчен халĕ полеводсем, садоводсем, овощеводсем, животноводсем, коневодсем тата ветеринари фельдшерĕсем 36.000 çын вĕренсе тухаççĕ.

Кĕске вăхăт хушшинчех ялхуçалăхĕн пĕр çул вĕренмелли шкулĕсем (вĕсене 1944 çулхи август уйăхĕнче уçнă) колхозниксем хушшинче питĕ паллă шкулсем пулса тăчĕç. Çав шкулсене вĕренме кĕрес текеннисем питĕ нумай. Сăмахран, Молотов хулинчи садоводсен шкулне 120 вырăна 800 заявлени ытла панă.

Пĕр çул вĕренмелли ялхуçалăх шкулĕсене производствăра лайăх ĕçлекен колхозниксене, МТС-семпе çĕрĕç органĕсенчи 7 çул вĕреннĕ работниксене илеççĕ. Хăшпĕр чухне 4 çул вĕреннĕ колхозниксене те илеççĕ. Шкулсене пуринчен ытларах Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене тата Хĕрлĕ Çартан таврăннă çынсене илеççĕ. Кăçал çав шкулсене ноябрĕн 10-мĕшĕнчен илсе çитермелле. (ТАСС).

КĔРКУННЕХИ ТАТА УЯВ УМĔНХИ ЯРМАРКĂСЕМ

СССР Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ союзлă республикăсенчи Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕсене кĕркуннехи, уяв умĕнхи тата çĕнĕ çул умĕнхи ярмаркăсене организацилеме кăтарту панă.

Вырăнти органсене вăрçă хыççăн Харьковра пулса иртнĕ пĕрремĕш ярмаркăн опытне шута илме хушнă. Кунта ярмаркăна ялхуçалăх продукчĕсене чылай илсе килнĕ пулнă. Продуктсен хакĕ ярмарка вăхăтĕнче 60—70 процент чухлĕ чакнă. Ярмаркăра куллен кирлĕ таварсене те нумай сутнă.

Сывăх вăхăтрах çавăн пек ярмаркăсене Киевра, Ташкентра, Петрозаводскра, Свердловскра тата Горькинче туса иртерме палăрнă. (ТАСС).

Ӳкерчĕк çинче: Владимир облаçĕнчи Гусь-Хрустальный хулинчи кĕленче çиприн салфеткăсем, абажурсем тата çакăн пек ытти япаласем тăвакан заводра цех начальникĕ П. Н. Кошиц С. В. Малышев тунă япаласене йышăнать.

А. СИДОРОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

РЕЗИНĂРАН УРАНА ТĂХĂНМАЛЛИ ЯПАЛАСЕМ ЫТЛАРАХ ТУСА КĂЛАРАÇÇĔ

Резина промышленноçĕ куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларма тытăнать. Уйрăмăн илсен, урана тăхăнмаллисем, санитарипе гигиена, спорт япалисем тата ыттисене те туса кăларма тытăнаççĕ. III-мĕш кварталта урана тăхăнмалли япаласене, II-мĕш кварталтипе танлаштарсан, 38,9 процент ытларах туса кăларнă.

«Красный треугольник» завод хĕрарăмсем валли вăрăм кунчаллă ботăсем туса кăларма тытăннă. Иртнĕ кунсенче çавăн пек ботăсен пĕрремĕш партине туса кăларнă. Завод арçынсем, хĕрарăмсем тата ача-пăчасем валли кĕске кунчаллă ботăсем те туса кăларма тытăннă. Вĕсен кунчи пусма тавартан, ăшĕ çемçе пиртен, тĕпĕ резинăран пулать.

Резина промышленность предприятийĕсенче арçынсемпе хĕрарăмсем валли калушсем туса кăларма тытăннă. Çавăн пекех тата хĕрарăмсем валли çӳллĕ кĕлеллĕ калушсем те ытларах туса кăлармa тытăнаççĕ.

IV-мĕш кварталта, III-мĕш кварталтипе танлаштарсан, 1 миллион мăшăр ытларах урана тăхăнмалли япаласем туса кăлараççĕ.

УКРАИНĂРА ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ÇИНЧЕН КАЛАКАН МАТЕРИАЛСЕНЕ ПУХНИ

Отечественнăй вăрçă историйĕ тĕлĕшпе ĕçлекен комисси Украинăра питĕ пысăк ĕç тăвать.

Çав комиссин вăрçăпа партизансен паке партизан отрячĕсемпе соединенийĕсен командирĕсем, герой-партизансем каласа панине нумай çырса илнĕ. Вĕсем хушшинче Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕсем С. А. Ковпакпа А. Ф. Федоров, Совет Союзĕн Геройĕсем Сабуров, Наумов, Клоков тата ыттисем каласа панисем те пур.

Комисси 150 отрядăн ĕçĕсем çинчен калакан отчета пухнă. Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç Киев, Сталино, Сумы, Ворошиловград, Чернигов тата ытти облаçсенче те кĕрешни çинчен калакан документсене нумай пухнă.

Комисси документсен 8 томлă сборникне тума хатĕрленет. Çав сборниксем çапла пулаççĕ: «Украина Отечественнăй вăрçă умĕн», «Ленин—Сталин партийĕ—пĕтĕм халăхăн кĕрешĕвне организацилекенĕ» тата ыттисем те. «Большевиксен партийĕ—партизансен юхăмне организацилекенĕ» ятлă монографие пичете параççĕ. Çавăн пекех тата Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ С. А. Ковпак ертсе пынă партизансен соединенийĕн историне те пичете хатĕрленĕ. (ТАСС).

КĂТАРТУЛЛĂ ШКУЛ КАБИНЕЧĔСЕМ

Педагогика наукисен Академийĕн Вĕренӳ меточĕсене тĕпчекен институчĕ кăтартуллă шкул кабинечĕсем—физика, хими, биологи, геологи, истори тата географи кабинечĕсем организацилет. Çавăн пек кабинетсене Мускаври, Ленинградри, Свердловскри тата Горькири чи лайăх шкулта тăваççĕ. (ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти активĕн районри пухăвĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Нумаях пулмасть кунта районри парти активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Вахвин юлташ ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XXIII-мĕш пленумĕн решенийĕсем çинчен доклад туса пачĕ. Хăйĕн докладĕнче вăл районри колхозсем государствăна тырă тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем парас, ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен каларĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕ государствăна тырă парас тĕлĕшпе республикăра йышăнса тăракан вырăн пĕрмаях каялла кайса пырать. Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне район, государствăна тырă памалли çулталăкри плана 27 процента çити тултарса, республикăра пĕрремĕш вырăн йышăнса тăнă. Сентябрь уйăхĕ тăршшĕпех район тырă памалли хăвăртлăхсене чакарса пынă. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли плана 72,9 процент тултарса, республикăра улттăмĕш вырăна юлнă, октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне 9-мĕш вырăна анса ларнă.

Районри малта пыракан колхозсем хăйсен парăмĕсене парса татнă хыççăн, государствăна тырă парас ĕçре юлса пыракан колхозсен тӳпи юлать. Çулталăкри плана тултарасси çавăн пирки питĕ вăрахăн пулса пырать.

Государствăна тырă парас тата ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлес тĕлĕшпе чи малтан хула çывăхĕнчи колхозсем юлса пыраççĕ. Нерядовăри колхозра председатель Борзов юлташ колхозниксене ĕçе мобилизацилес вырăнне: «Çанталăка хирĕç эпир мĕн тума пултарăпăр ĕнтĕ», тесе ларать. Тӳррипе каласан, кунта государствăна тырă парас ĕçе тытăнман та темелле. Колхозра сушилкăна та октябрĕн пуçламăшĕнче çеç туса пĕтернĕ, талăкра унта 500 килограмм тырă типĕтме пулать, анчах унпа та çителĕклĕ таран усă курмаççĕ. Колхозра 16 тонна çапнă тырă пур пулин те, эрне хушши ĕнтĕ государствăна пĕр килограмм тырă та паман.

Новинскри колхоз председателĕ коммунист Муравьев государствăна тырă парас ĕçе, тĕрĕссипе каласан, хăй чăрмантарса пырать. «Пирĕн государствăна пама тырă çитмест» тесе, вăл тырă вырăнне çĕрулми парса, тырра колхозра упраса хăварма тăрăшать. Сăмах майĕн каласан, ку колхозра государствăна çĕрулми пама та ку тарана çитсе те тытăнман-ха.

Государствăна çĕрулми парас ĕç районра çителĕклĕ пулса пымасть. Районри 55 колхозран 8 колхоз кăна çĕрулми кăларса пĕтернĕ, 9 колхоз государствăна çак таранччен пĕр килограмм çĕрулми те паман.

Çакăн пек çитменлĕхсем мĕнрен килеççĕ-ха?

Район малта пыракансен шутĕнче пулнипе районри руководительсем лăпланса ларма шутланă. Районри çĕрĕç пайĕ колхозсене, вăл шутрах кая юлса пыракан колхозсене те, уйрăмăн ертсе пымасть. Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Железков юлташ тата главнăй агроном Спиридонов юлташ колхозсенчен сводкăсем пухса çеç лараççĕ. Уполнаркомзаг аппарачĕ те çителĕклĕ ĕçлемест.

Çаксене пула вара колхозсенчи ялхуçалăх ĕçĕсем вăраха юлса пыраççĕ: ялхуçалăх ĕçĕсене черетпе туса пырас сиенлĕ практика пурри палăрать. Сăмахран, çĕрулми кăларма тытăнтăмăр тесе, хăшпĕр колхозсем авăн çапасси çинчен пуçĕпех те манса кайнă. Октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне районра авăн çапмалли плана 67 процент кăна пурнăçланă. Амачкинăри колхоз 19 кун хушши авăн çапман.

Пур ĕçсене те пăрахса, пĕр ĕçе кăна тăванçи пек кăтартма хăтланнин сиенĕ кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре те палăрчĕ. Район кĕрхи çĕртмене октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне туса пĕтермелле пулнă пулсан, хальхи вăхăт тĕлне плана 59 процента яхăн кăна тултарнă. Асăннă Новинскри колхозра октябрĕн 2-мĕшĕнчех кĕрхи çĕртме тума пăрахнă. Районри 250 вăкăртан 51 вăкăрпа кăна ялхуçалăх ĕçĕсенче усă кураççĕ. «Волна» колхозра 8 вăкăр пур, анчах вĕсенчен пĕрнипе те кĕрхи çĕртме ĕçĕнче усă курман.

Парти активĕн пухăвĕ юлса пыракан колхозсен ĕçне çак кунсенчех лайăхлатма, ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмпех вĕçлесе çитерме, государство умĕнчи парăмсене планран иртерсе парса татма хушса хăварчĕ.

И. САЛАМБЕК.

„Клевер“ колхозри коммунистсем

ИШЛЕЙ. Ялти пуçламăш парторганизацисем колхозри пĕтĕм хуçалăхпа политикăллă ĕçсемшĕн ответлă пулса тăраççĕ. Çакна шута илсе, «Клевер» колхозри пуçламăш парторганизаци (секретарĕ Кудряшов юлташ) хăйĕн мĕнпур ĕçне колхоз производствипе таччăн çыхăнтарса пырать. Парторганизацинче 7 коммунист, вĕсем пурте тенĕ пекех колхозри ĕçе татса паракан чи ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ. П. Башмаков, М. Толстова, М. Башмаков коммунистсем бригадирта ĕçлеççĕ. Вĕсем кашниех хăйсен ĕçĕнче паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ, производствăра лайăх ĕçленипе пĕрлех политмассăллă ĕçе те тимлĕн туса пыраççĕ. Агитаторсем пурте—коммунистсемпе комсомолецсем, вĕсем тырă вырнă вăхăтра кашни бригадăрах 5-шер номер боевой листоксем кăларнă, колхозниксене тăтăшах çĕнĕ хаçатсем вуласа панă, тĕнчери лару-тăру çинчен калаçусем ирттернĕ.

Коммунистсем çакăн пек тăрăшса ĕçленине пула «Клевер» колхоз районра малта пыракан колхозсенчен пĕри пулса тăчĕ. Колхоз тĕштырăсене уйхиртен кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пухса кĕртрĕ. Çамрăксемпе пĕрлех колхозра ваттисем те тимлĕн ĕçлеççĕ. Акă, 64 çулти И. Яшковпа Л. Кульков колхозниксем государствăна ыванма пĕлмесĕр тырă леçеççĕ. Вĕсем хатĕрлев пунктне 180-шар пăт ытла тырă леçнĕ. Çавăн пекех 66 çулти М. Кочерков машиноведра, 55 çулти П. Алмазов пахалăх комисси председателĕнче, 65 çулти Т. Нефедов выльăх-чĕрлĕх фермин заведующийĕнче ĕçлеççĕ.

Колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана кăçал иртерсе тултарчĕ. Выльăх-чĕрлĕх витисене пурне те хĕле хатĕрлесе çитернĕ, 75 тонна силос хывса хăварнă, ытти апат-çимĕç те çителĕклĕ.

Колхоз государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем: аш-какай, çăмарта, сĕт-çу, çăм парас тĕлĕшпе те плана ăнăçлăн тултарнă. Халĕ кунта выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене çитес çулшăн параççĕ.

Н. КОНДАКОВ.

ВКП(б) ИСТОРИНЕ ВĔРЕНЕКЕНСЕН КРУЖОКĔ

Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан фабрикăри коммунистсемпе комсомолецсем ВКП(б) историне вĕренес тĕлĕшпе кружок организациленĕ. Кружока фабрикăри производство заведующийĕ, ВКП(б) членĕн кандидачĕ Мясникова юлташ ертсе пырать. Кружокра пурĕ 13 çын. Ку тарана çитсе кружок 3 заняти туса ирттернĕ. Кружокри занятисене хулари парти кабинечĕн лекторĕ Буркова юлташ ирттерет.

КĔРКУННЕ

Çулçăсем сархайрĕç çĕнĕрен,
Вĕл те вĕл ӳкеç ĕнтĕ çĕре.

Çапла иртрĕ пирĕн сарă кĕр,
Савнине кĕтет-ха сарă хĕр.

Вăл пăхать сенкер тӳпе çине,
Тĕп пулать хур-кайăк иртнине.

«Эй, никан-никан хур-кайăксем,
Çывăх пулччăр инçе çулăрсем.

Тен эсир, пире кăмăл туса,
Канмăр-ши Çавал хĕрне анса?

Сирĕнтен эп савнă тусăма
Каласа ярам пĕр ăш сăмах.

Савнă тусăм ман инçе, инçе...
Хăй çĕнтерсе илнĕ нимĕç çĕрĕнче.

Мĕн тери кĕтетĕп эп ăна!
Ĕмĕтĕм те манăн—вăл кăна».

Кайăк-хур картийĕ какалать,
Ун сассийĕ ак çапла калать:

Лăплансам, пикеçĕм, ан кулян
Кĕтнĕ ĕмĕт часах çитĕ сан.

Анăçран, ав, поезд ыткăнать,
Чечекпе кĕтсе ил эс ăна.

Таврăнаççĕ киле паттăрсем,
Пĕри санăн, сарă хĕр, пĕлсем.

А. КĂЛГАН.

Çĕркăмрăк тиекен чи лайăх кран

Совет Союзĕнчи паровозсен Тĕп хуçалăхĕ, паровозсен 1945 çулхи август уйăхĕнчи ĕçĕсене пăхса тухса, Канашри паровоз деповĕнчи К. Лашин бригадир пулса ĕçлекен çĕркăмрăк тиекен 260-мĕш крана «Совет Союзĕн çĕркăмрăк тиекен чи лайăх кранĕ» ятне панă. Лашин юлташ бригади хĕле пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ. Халĕ бригадăри рабочисем, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, уява çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

В. ЕФИМОВ.

Çулталăкри плана срокчен тултарасшăн

СĔМĔРЛЕ. Районри промкомбинат кăçалхи çулăн малтанхи кварталĕсенче производство планне тултарса пырайман. Виççĕмĕш кварталта промкомбинат директорĕ пулса ĕçлеме фронтран таврăннă Чернов юлташа лартнă хыççăн комбинат ĕçĕсем чылай лайăхланчĕç. Вăл тăрăшнипе халĕ нумай ялсенче çĕнĕ артельсемпе мастерскойсем уçăлчĕç.

Хутарта çĕвĕ çĕлекен, атă-пушмак тăвакан, чăпта çапакан тата пичке-каткасем тăвакан мастерскойсем ĕçлеме тытăнчĕç. Туванта чӳлмексем, чашăк-тирĕксем, тир-сăран тăваççĕ. Кăмашара корзинăсем тăвассине организациленĕ. Мыслецри артель йывăç кĕреçесем, ачасем валли çунашкасем туса кăларать. Промкомбинат пурĕ 12 тĕрлĕ производствăна пĕрлештерсе тăрать.

Промкомбинат виççĕмĕш кварталти производство планне вăхăтра тултарчĕ. Çĕвĕ çĕлекен мастерскойсем пĕтĕм плана 122 процент, атă-пушмак тăвас енĕпе 175 процент, тӳшексемпе минтерсем çĕлес енĕпе 151 процент тултарнă.

Промкомбинатра плана ытлашшипех тултарса пыракан стахановецсем те сахал мар. Ромашкина, Мельникова, Мартынова, Иваницкая тата Муфтеева работницăсем плана кашни уйăхрах ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

Промкомбинат хăйĕн çулталăк планне Сталинла Конституци кунĕ тĕлне пĕтĕмпех тултарма обязательство илчĕ. Ку тĕлĕшпе халĕ комбинатра социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ.

Ан. ТАНЬКОВ.

Пĕчĕк фельетон

Хлестаковран та ирттернĕ...

Николай Васильевич Гоголĕн «Ревизор» ятлă комедийĕнчи Хлестаков Питĕр хулинчен Саратова кайнă май пĕр хулана çитсе чарăнать те ăна кунта ревизор вырăнне йышăнаççĕ. Вара çак хулара тĕрлĕ мыскара пулса иртет. Ку вăл — ĕлĕкхи Русь çĕрĕнче пулнă ĕç.

Эпир кунта ĕлĕкхи Русь çĕрĕнчи Хлестаков çинчен мар, хальхи Русев хушаматлă çыннăн мыскарисем çинчен каласа парасшăн.

Республикăри «Заготживсырье» кантурĕнче инструктор пулса ĕçлекен хăйхи Русев Шупашкартан Шăхасана çĕрле çитнĕ те колхозник çурчĕн алăкне пырса шакканă.

— Уçăр!—тенĕ вăл, сассине хулăмлатса,—сирĕнпе Совнарком председателĕн заместителĕ калаçать!

Хулăм сас хăйĕн ĕçне тунă. Кĕнĕ—вырнаçнă. Тĕрĕссипе, ӳсĕр Русев, колхозник çуртĕнче вырăн хатĕрлесе панă паманах тĕшĕрĕлсе анса, ыйăха харлаттарма тытăннă.

Тепĕр ирхине тăрсан, вăл пуçĕ ыратнине туйнă.

— Сельпо!—тенĕ вăл, пуçĕнчи шухăшĕсене йывăррăн çавăрттаркаласа.—Мана халь пĕр сельпо кăна çăмăллăх пама пултарать.

Пынă хăйхи Русев сельпо правленине. Кунта та вăл пысăк пуçлăхăн «тантикине» тытма шутланă. Çавна май вăл тӳрех ревизор сассипе хăтăрма тытăннă:

— Мĕншĕн таварçавăрнăш планне тултармастăр? Шупашкарта эрех нумай, çавна та кӳрсе килме кахалланса ларатăр. Укçа-тенкĕ мобилизацилеме пĕлместĕр...

Русевăн мĕн ыратнине сельпорисем часах туйса илнĕ. Правлени председателĕ ăна хăвăртрах столовăя ертсе кайнă та кунта апат умĕн Русевăн пуçне юсамалăх «çуттине» ыйтса илнĕ.

Часах çак «ревизорăн» куçне тĕнче илемлĕн курăнса кайнă. Пурте кăмăллă, ырă... Уйрăмах ăна официантка килĕшсе кайнă. Русевăн куçĕсем, романри пек, ялкăшса çунма тытăннă.

— Хĕрĕм,—тенĕ вăл, хĕре чĕнсе илсе,—пĕлетĕн-и эсĕ ман чĕрере мĕн çуннине? Тăлăх эпĕ, никам та çук манăн. Чĕрере тӳсме çук йывăр пĕчченлĕх пусăрăнтарса тăрать. Эх, ăнлансанччĕ эсĕ, пикеçĕм... Эпĕ сана ала çинчех çĕклесе çӳренĕ пулăттăм... Шупашкар, Атăл... Сăпка пек сиктерекен хумсем... Епле илемлĕ пирĕн пулас пурнăç!..

Куратăр-и: епле сăмах ăсти вăл Русев! Нимĕнле поэт та танлашас çук унпала.

Çапла «Заготживсырье» инструкторĕ хĕрĕн пуçне илемлĕ сăмахсемпе çавăрать те «авланса» пĕр пилĕк кун хушши пыл та çу пурăнать.

Анчах сасартăк вăл тепĕр хĕре тĕл пулать. Ку малтанхинчен те илемлĕрех.

— Пĕлетĕн-и эсĕ ман чĕрере мĕн çуннине?

Русев хăйĕн юратупа тулнă чĕринчен мĕн тери илемлĕ сăмахсем шăратса кăларнине, çав сăмахсем хăшпĕрисен пуçне çавăрма пултарнине эпир çӳлерехре куртăмăр. Пĕр сăмахпа каласан, «Заготживсырье» инструкторĕ татах «авланать».

Вăл ку тĕлĕшпе паллă Хлестаковран та иртерет. Лешĕ, Хлестаковĕ, городничий хĕрĕн пуçне кăна çавăрнăччĕ, авланса ĕлкĕрейменччĕ. Ку вара эрне хушшинчех икĕ хутчен авланать. Пыр та калаç унпала Хлестаков!

Анчах темле пыл та çисен-çисен йӳçĕ пулса каять. Хлестаков та, кĕтмен çĕртен инкек сиксе тухасса сиссе, Саратовалла тухса шăвать.

Русев хăйхи «нумай ĕç туса» ывăннă хыççăн, хăйĕн удостоверенине палăрттарма райисполкома пырать.

— Сире пулăшма ячĕç мана,—тет вăл.—Выльăх-чĕрлĕх çимĕçĕсем хатĕрлĕме...

Кун хыççăн Русев татах пĕр-икĕ кун сельпора çăкăр валеçес ĕçе «тĕрĕслекелет». Пырĕ питĕ ыраннипе аптекăна пырса, спирт пуррипе çуккине ыйтса пĕлет. Анчах Шăхасанта «чуна усакан» япала урăх çуккине кура, вăл Шупашкара тухса шăвăнать.

Русева кĕтсе паян кун та «икĕ тăлăх арăм» тата закон тунсăхлаççĕ.

Василий ВАРБУСЬ.

Нимĕçсен чи паллă вăрçă преступникĕсене суд тăвакан Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналĕн пĕрремĕш уçă ларăвĕ

БЕРЛИН, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 18-мĕшĕнче Берлинра нимĕçсен чи паллă вăрçă преступникĕсене суд тăвакан Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналĕн пĕрремĕш уçă ларăвĕ пулса иртнĕ. Суд сĕтелĕ тавра Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналĕн членĕсем ларнă: Совет Союзĕнчен — юстици генерал-майорĕ Никитченко тата унăн заместителĕ Волчков, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен—судья Биддл тата унăн заместителĕ Паркер, Великобританирен—судья лорд Лоуренс тата унăн заместителĕ Биркетт, Францирен — судья Д. Фабр тата унăн заместителĕ Фальков.

Ларура çаксем пулнă: Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналĕн Совет Союзĕ уйăрса лартнă тĕп айăплакан Руденко тата унăн помощникĕ Денисов, Великобритани уйăрса лартнă тĕп айăплакан Хартли Шоукросс, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем уйăрса лартнă тĕп айăплакан Роберт Джексон вырăнне унăн помощникĕ Шей, Франци уйăрса лартнă тĕп айăплакан де Ментон вырăнне унăн помощникĕ Дюбосс.

10 сехет те 30 минутра нимĕçсен чи паллă вăрçă преступникĕсене суд тума туса хунă Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналĕн малтанхи ларăвне уçнă. Трибунал членĕсем пурте пĕрин хыççăн тепри присяга панă. Вĕсем кашниех хăйсен ĕçĕсене чыслăн, ырă кăмăлпа тата тӳррĕн туса пыма сăмах панă.

Ларăва Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналĕн членĕ Совет Союзĕн представителĕ Никитченко генерал-майор уçнă. Вăл лару уçнă чухне çапла каланă: «Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналĕн çак ларăвне, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви, Франци республикин Вăхăтлăх правительстви, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви тата Великобританипе Çурçĕр Ирландин Пĕрлешнĕ Королевствин Правительстви Европăри тĕнĕл держависен чи паллă вăрçă преступникĕсене айăплас тĕлĕшпе 1945 çулхи августăн 8-мĕшĕнче Лондонра калаçса татăлнă тăрăх Берлинра пухнă, çак ларăва айăпласа çырнине йышăнма пухнă. Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналĕн ларăвне уçăлнă тесе шутлатăп».

Çак сăмахсене вара французла тата акăлчанла каласа панă.

Кун хыççăн Совет Союзĕ уйăрса лартнă тĕп айăплакан Руденко вăрçă преступникĕсене айăпласа çырнин вырăсла текстне панă. Франци, Великобритани тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен айăплу представителĕсем французла тата акăлчанла çырнă текстсене панă. Тĕп айăплакансем çапла каланă: айăпласа çырнин çак текстне тĕп айăплакансен комитечĕ пĕр кăмăллă пулса йышăннă, тенĕ.

Айăпласа çырнин вырăсла, французла тата акăлчанла текстсене тĕп айăплакансен Çар Трибуналне панă хыççăн Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналĕн ларăвне председатель пулса ертсе пыракан генерал-майор Никитченко çапла каланă:

«Айăпласа çырнинче, тĕп айăплакансен комитечĕ тăратнăскерĕнче, çак айăплакансен преступленийĕсене кăтартса панă: Герман Вильгельм Геринг, Рудольф Гесс, Иоахим фон Риббентроп, Роберт Лей, Вильгельм Кейтель, Эрнст Кальтенбруннер, Альфред Розенберг, Ганс Франк, Вильгельм Фрик, Юлиус Штрейхер, Вальтер Функ, Хальмар Шахт, Густав Крупп фон Болен Унд Гальбах, Карл Дениц, Эрих Редер, Бальдур фон Ширах, Фриц Заукель, Альфред Йодль, Мартин Берман, Франц фон Папен, Артур Зейсс-Инкварт, Альберт Шпеер, Константин фон Нейрат тата Ганс Фриче преступленийĕсене. Çав çынсем кашни уйрăм та тата çак ушкăнсемпе организацисенче ĕçленешĕн те айăпланаççĕ: правительство кабинетĕнче, национал-социалистсен партине ертсе пынă çынсен ушкăнĕнче, Германири национал-социалистсен партийĕн охраннăй отрячĕсенче (СС), ку шута хăрушсăрлăх службин ушкăнĕсем те (СД) кĕреççĕ, государствăн вăрттăн полицийĕнче (гестапо), Германири национал-социалистсен партийĕн штурмовой отрячĕсенче (СА), Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен генеральнăй штабĕпе аслă командованийĕнче ĕçленĕшĕн (çаксене «В» тенĕ асăрхаттарнинче кăтартса панă).

Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналĕ Уставĕн 16-мĕшпе 23-мĕш статьисенче каланă тăрăх, айăпланакансем хăйсен хутне хăйсем кĕме пултараççĕ тата вĕсене адвокатсем хӳтĕлеме пултараççĕ. Айăпланакансем çав адвокатсене хăйсен çĕршывĕнчи судра адвокат ĕçне тума пултаракансенчен суйласа илме пултараççĕ, е вĕсем ыйтсан, вĕсене хӳтĕлеме защитниксене Çар Трибуналĕ уйăрса парать. Трибуналăн ятарласа уйăрнă секретарĕ пур. Çав секретарь айăпланакансене пурне те вĕсен прависене пĕлтерет. Айăпланакансенчен хăшĕ те пулин ыйтнă защитник хăйĕн ĕçĕсене тума пултараймасть пулсан, Çар Трибуналĕ ăна защитник хăй парать.

Айăпланакансене айăпласа çырнине паян параççĕ. Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналĕ суд Нюрнберг хулинче хăçан пуçланассине çак айăпласа çырнине панă хыççăн 30 кунтан кая юлмасăр палăртса хурать.

Айăпласа çырнине пĕр вăхăтрах Лондонра, Мускавра, Вашингтонра тата Парижра кăçалхи октябрĕн 18-мĕшĕнче кĕçнерникун Гринвич вăхăчĕпе 20 сехет çитнĕ хыççăн пичетлеççĕ».

Председатель пулса ертсе пынă генерал-майор Никитченко çапла каласа панă хыççăн Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналĕн малтанхи уçă ларăвне хупнă.

СУЙЛАВА ТĔРĔС МАР ИРТТЕРМЕ ХАТĔРЛЕННИНЕ ХИРĔÇ ПЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Лиссабонран пĕлтернĕ тăрăх, Португали оппозицийĕн лидерĕсем октябрĕн 16-мĕшĕнче правительствăна сасартăк ноябрĕн 18-мĕшĕнче ирттерме йышăннă суйлава хăйсем хутшăнманни çинчен пĕлтернĕ. 11 çынтан тăракан делегаци иртнĕ эрнере суйлав условийĕсем тĕлĕшпе требованисем кăларса тăратмашкăн митинг тума ирĕк пама ыйтнă. Çав делегаци паян граждăн губернаторĕ патне правительствăн ответне пĕлме пынă. Губернатор оппозицин пур требованийĕсене те йышăнманни çинчен хыттăн каласа пĕлтернĕ. Делегаци членĕ доктор Лима Альвес губернатора çапла каланă: оппозици суйлава хутшăнмасть, вăл кĕрешме пăрахмасть, законлă майсемпе пуринпе те усă курса кĕрешет, тенĕ.

ГРЕЦИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

АФИНЫ, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Элефтерия» хаçат хăйĕн умстатьинче аслă çар çыннисемпе монархистсен правительствăсăр пурăннă çак вăхăтра тунă реакцилле ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларать. Хаçат çапла çырать: çарпа флотăн тата жандармерипе полицин аслă офицерĕсем «аслă вырăнти çынсене» çапла каланă: центрти партисенчен демократиллĕ правительство тăвас пулсан, е çавăн пек хăйсем йышăнма пултарайман ытти правительство тăвас пулсан, Грецире «йĕркесĕрлĕхсем» сиксе тухĕç, вара эпир çав «йĕркесĕрлĕхсене» кансĕрлеме пултараймăпăр, тенĕ. Хаçат пĕлнĕ тăрăх, çарпа монархистсен шайки переворот тумалли план хатĕрлесе хунă, вăл хăйне итлекен çар чăçĕсем тата «Х» ятлă хĕçпăшаллă фашистла бандăсем пулăшассине шанса тăрать.

АРГЕНТИНĂРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Монтевидео хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Аргентинăра лару-тăру сасартăк улшăнса кайнă: вице-президент тата çар министрĕ пулса ĕçленĕ Хуан Перон полковника Фаррель президент каллех вырăна лартнă.

Перон Буэнос-Айреса таврăннă. Кунта килнĕ хыпарсем тăрăх, Перон маларах президента çапла каланă пулнă: çар министрне Авалос генерала тата тинĕс-çар министрне Лима адмирала вырăнтан кăлармасан, эпĕ правительствăна кĕместĕп, тенĕ; çав министрсем хăй вăхăтĕнче Перона арестлесе столицăран кăларттарса янă.

Юлашки хыпарсем тăрăх, Перон лартнă требование пурнăçа кĕртнĕ. Çар министрĕ пулма Умберто Соса Молин генерала, тинĕс-çар министрĕ пулма—Квелардо Кантин контр-адмирала лартнă.

АМЕРИКАНЕЦСЕМ ОККУПАЦИЛЕНĔ ЗОНĂРИ ГЕРМАНИ ФИНАНСИСЧĔСЕМ ÇИНЕ МĔНЛЕ ПĂХНИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн корреспонденчĕ Майн çинчи Франкфуртран çапла пĕлтерет: США-н çар министерстви нимĕçсен паллă финансисчĕсене арестлесси çинчен икĕ хутчен приказ панă пулин те, Америкăн Германири çар влаçĕсем вĕсене арестлеме тытăнса тăраççĕ-ха.

Майăн 23-мĕшĕнче нацистла партие тата унпа пĕр йышши организацисене салатса ярасси çинчен, Германири пысăк предприятисемпе фирмăсене пĕтересси çинчен директива илнĕччĕ. Çав директивăра Германири индустри компанийĕсен пуçĕнче тăнă çынсене, арестлеме тивĕçлĕскерсене, кăтартса панăччĕ. Анчах та, тесе çырать малалла корреспондент, çавăн пек директива пур пулин те, ĕçе тĕпчени çакна кăтартса пачĕ: американецсем оккупациллĕ зонăра Берлинри ултă банк пуçĕнче тăнă çынсене халĕ те арестлемен. Дрезденри банкăн директорĕ Кетц халĕ те Мюнхенра пурăнать. Вăл гитлерла Германири пур çар предприятийĕсемпе те çыхăнса ĕçленĕ. «Дейч банк» директорĕ Экенер халĕ те французсем оккупациленĕ зонăра пурăнать. Нимĕç банкĕсен 9 директорĕ американецсем оккупациленĕ зонăра пурăнаççĕ, вĕсенчен иккĕшне американецсем арестленĕччĕ, анчах часах ирĕке кăларса ячĕç. Дрезденри банкăн 11 директорĕ американецсем оккупациленĕ зонăра пурăнаççĕ, 15 банкир ăçта пурăннине халĕ те тĕпчесе пĕлмен-ха. Çав 15 банкиртан пиллĕкĕшĕ американецсем оккупациленĕ зонăра ирĕкре пурăнни паллă.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Миддлтон Майн çинчи Франкфуртран пĕлтернĕ тăрăх, çар министерстви нимĕçсен 1800 финансистне арестлеме панă приказа халĕ те пурнăçа кĕртмен.

БОЛГАРИРИ ХАЛĂХ ПУХĂВНЕ СУЙЛАС УМĔН

СОФИЯ, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер, суйлав законĕ тăрăх, Халăх Пухăвне суйлама тăратакан кандидатсен списокĕсене регистрацилемелли срок тухнă. Отечественнăй фронт 23 суйлав коллегинче те кандидатсен пĕр списокне тăратнă. Отечественнăй фронт комитечĕсем депутата суйлама тăратнă 276 кандидатран 94 кандидат Болгарири рабочи партин членĕсем (коммунистсем), 94 кандидат Болгарири çĕр ĕçĕпе пурăнакансен халăх союзĕн членĕсем, 31 кандидат Болгарири рабочисен социал-демократсен партийĕн членĕсем, 11 кандидат радикалсен партийĕн членĕсем тата 1 кандидат независимăй партин членĕсем пулса тăраççĕ.

Отечественнăй фронт Болгарири рабочисен партийĕнчен София хулинчи 1-мĕш суйлав коллегийĕ тăрăх пĕрремĕш кандидата Георгий Димитрова, ун хыççăн вара Болгарири рабочисен партийĕн центральнăй комитечĕн секретарьне Трайчо Востока тăратнă. Отечественнăй фронт «Звено» ятлă халăх союзĕнчен Бургасри 1-мĕш суйлав коллегийĕ тăрăх пĕрремĕш кандидата премьер-министра Кимон Георгиева тăратнă. Болгарири çĕр ĕçĕпе пурăнакансен халăх союзĕн секретарĕ Александр Обов Отечественнăй фронт кандидачĕсен Пловдиври 2-мĕш суйлав коллегийĕ тăрăх тăратнă списокне пуçласа ярать. Суту-илӳ министрĕ тата Болгарири социал-демократсен партийĕн секретарĕ Димитрий Нейков Отечественнăй фронт Русенри 2-мĕш суйлав коллегийĕ тăрăх тăратнă пĕрремĕш кандидат пулса тăрать. Çутĕç министрĕ тата радикалсен партийĕн секретарĕ Стоян Костурков Отечественнăй фронт Пловдив суйлав коллегийĕ тăрăх тăратнă пĕрремĕш кандидат пулса тăрать.

Отечественнăй фронтăн списокĕсемсĕр пуçне, София область сучĕ оппозиционерсен 4 списокне регистрациленĕ. Провинцисенче те пур коллегисем тăрăх та тенĕ пекех Отечественнăй фронтăн кандидачĕсен списокĕсемпе пĕрлех оппозиционерсен тата независимăйсен кандидачĕсен списокĕсене регистрациленĕ.

ОВЕРСИС НЬЮС АГЕНТСТВИ ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ХĂЙСЕН ÇЫННИСЕНЕ ПЫТАРНИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Оверсис Ньюс агентствин Женевăри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: шанчăклă çынсем каланă тăрăх, вăрçă пĕтес умĕн гитлеровецсем фашистла çамрăксен «Орденс Бюрген» ятлă шкулĕсенче вĕренекен 200.000 çынна вăрттăнлатса пытарнă. Вĕсене вăрçăра çухалнисен хисепне кĕртсе, фашистсен организацине çĕнĕрен пуçласа янă çĕрте усă курас тесе пытарнă. Çавăн пек агентсем халĕ пиншерĕн Швецире, Швейцарире, Испанире, Аргентинăра пурăнаççĕ. Вĕсене гестапон сиенлĕ ĕçĕсене тĕплĕн вĕрентсе хатĕрленĕ. Нумаях та пулмасть Женевăра фашистсен листовкисене çавсем салатнă пулмалла.

ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЧИ ТЕХНИКĂН ÇĔНĔ ТĔСЛĔХĔСЕМ

США-ра ГРАЖДАНСЕНЕ ТУРТТАРСА ÇӲРЕКЕН ÇĔНĔ ЙЫШШИ САМОЛЕТСЕМ ТУМА ПУÇЛАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат Сан-Францискăри радио пĕлтернине пичетлет. Пĕлтерӳре çапла каланă: çитес уйăхсем хушшинче США-ра пассажирсене турттарса çӳрекен çĕнĕ йышши самолет ĕçлеме пуçлать. Вăл 6 сехет хушшинче Атлантика океанĕ хĕрринчен Лăпкă океан хĕррине илсе çитерет. Вăл Нью-Йоркран Лондона пĕр анса лармасăр вĕçсе çитет. Çав самолет çине 70—100 çын ларма пултарать. Вăл сехетре 600 километр ытла каять. Çак çĕнĕ самолет пассажирсемшĕн халиччен тунă самолетсенчен чылай меллĕрех пулĕ, тесе пĕлтереççĕ.

Ассошиэйтед Пресс агентстви Калифорни штатĕнчи Лонгвичран пĕлтернĕ тăрăх, çĕр çине анса лармалли 4 моторлă «Дуглас-74» ятлă чи пысăк самолета сăнаса çитернĕ. Çав самолетăн çуначĕсен тăршшĕ—52 метр, самолетăн хăйĕн тăршшĕ—37 метр, çӳллĕшĕ — 13 метр, тиесен вăл 70 тонна таять, сехетре 480 километр каять.

Çав самолет çине 108 пассажир ларма пултарать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Тарасасем юсакан завода Шупашкарти, Канашри, Улатăрти, Етĕрнери, Çĕмĕрлери тата Чкаловскри тарасасем юсакан мастерскойсенче ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: слесарьсем, тараса мастерĕсем, жестянщиксем, лудильщиксем тата хуралçăсем. Çав ĕçсене вĕренекен учениксене те илеççĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, улица Ворошилова, 46.

СССР Наркомрезинопромĕн Главрастнаучукăн Чăваш конторине республикăри каучук лартса ӳстерекен районсенче ĕçлеме агрономсем кирлĕ. Ĕç укçи 600 тенкĕрен пуçласа 800 тенке çитиччен тӳлеççĕ. Хăйне уйрăм ĕç тумтирĕ тата промтоварсем параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Калинина, 95. Тел. 5—29.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-83, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн—3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабсельккорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00432 Типография № 1 Управ. полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № [illegible] ф. 6. 59 42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.